**Нумай пулмасть-ха сивĕччĕ...**

Нумай пулмасть-ха ыткăнатчĕ
Юр çийĕн сивĕ кусăрка.
Пуш уйăхĕ йăлт улăштарчĕ
Кĕртсем хыван çанталăка.

Ĕнтĕ тӳпе çиçет кĕреннĕн,
Çырма юхать юрла-юрла.
Сарай çинчен анса хĕвеллĕн
Тапăртатса ташлать тумла.

Шап-шур кĕпеллĕ йăрăс хурăн
Шăв-шавлă халĕ кунĕпех:
Лартаççĕ кураксем хăюллăн
Пӳрчĕсене турат çинех.

Хăва та капăр. Хăтлăх тупнăн
Хулли çине ĕретленсе
Ларма хĕрсем пек ларса тухнă
Сар çӳçлĕ кăпăш кăчкăсем.

Хаваслă шăнкăрч хĕпĕртӳллĕн
Ши! шăхăрать те шăхличне
Тăри те туслăн, илĕртӳллĕн
Тăсса ярать хăй купăсне...

Янрать вара çап-çут çур кунĕ
Чун хавалне çĕклентерсех.
...Тĕнчешĕн – ирĕк пурнăç çулĕ,
Этемшĕн çеç вăл хĕсĕкрех.

*Галкин, А. Нумай пулмасть-ха сивĕччĕ... // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 308.*